# Ылхан

Ылхан сана, хура ылхан,
Тилĕпеле сысна йăхне.
Чее те сĕмсĕр майпалан
Эс кĕтĕн пирĕн çĕр çине.

Ылхан сана, виç хут ылхан,
Çĕлен-калта йăхне-тĕпне.
Пĕр систермесĕр йăвунтан
Эс тăсрăн вилĕм сăннине.

Ылхан сана, çич хут ылхан,
Тĕнчен хура зар-хурахне,
Ăмсаннă имĕш тахçантан
Эс пирĕн халăх пурлăхне.

Ылхан сана, çĕр хут ылхан
Ал тăснăшăн хĕвел çине.
Хăртасшăн пулнă-мĕн, тăшман,
Эс пирĕн халăх телейне.

Ылхан çине ылхан сана
Таптанăшăн çĕре-шыва.
Ăçта эс пусăн уруна
Унта путланăн эс шавах.

Ылхан сана, пин хут ылхан
Аркатнăшăн хуласене,
Çак çут тĕнче ниçта, нихçан
Сана ан илтĕр ытамне.

Ылхан сана, ылхан кӑна
Асап кӳнишӗн халӑха,
Тӑрлавсӑр вилӗм сан чунна
Кӑлартӑр чапсӑр, кӑлӑхах.

Ҫӗр ҫӗклейми ылхан сана
Пур ӗмӗр-ӗмӗр тӑршшине.
Аҫа кикен те тӑпруна
Шӑтса ан палӑрттӑр санне!
1942

*Ивник, И. Ылхан / И. Ивник // Чӑваш сӑмахлӑхӗ : 10-мӗш класӑн вӗренӳпе вулав кӗнеки / Н.Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатӗрленӗ. – Шупашкар, 1996. – II пай. - С. 212-213.*